24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1941
ОКТЯБРЬ
11
ШАМАТКУН
240 (5955) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Йăваш чунлă пулма тата лăпланса ларма пăрахас пулать

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç совет халăхĕн отечественнăй аслă вăрçи виçĕ уйăх çурă пырать ĕнтĕ. Совет Союзне икĕ уйăхра парăнтарас тĕлĕшпе çынçисен Гитлер тунă пурте пĕлсе тăракан плансем çак вăхăт хушшинче пĕтĕмĕшпех арканса кайрĕç. Гитлерăн хăйĕн сăмахĕнче: «Пирĕн противникăн вăйĕ мĕн чухлĕ пулни çинчен калакан ыйтура эпир йăнăш турăмăр» тесе чунне ыраттарса йышăнса калама тиврĕ.

Хĕвелтухăç фронтĕнче нимĕçсен фашистла войскисен — вилнисене, аманнисене тата тытăна лекнисене пĕрле илсе шутласан — 3 миллион çын ытла пĕтнĕ, урăхла каласан, çакă вăл тĕнчери иртнĕ вăрçă вăхăтĕнче нимĕçсен пур фронтсенче те икĕ çул хушшинчи çапăçусенче пĕтнĕ чухлĕ пулать. Вооружени енĕпе те нимĕçсен йывăр сухатусем пулнă. Вăхăтлăха тытса илнĕ совет хулисемпе ялĕсемшĕн нимĕçсен питĕ те хаклă тӳлеме тиврĕ. Нимĕçсен миллионшар çемьисем хăйсен тăванĕсем вилнĕшĕн е суранланса юлнăшăн йĕреççĕ. Çак юнлă тата вăрăма пыракан вăрçăра вара жертвăсем маталшне татах та ытларах пулаççĕ. Çынсем питех те нумайăн пĕтни тата çак кĕрешӳре Германия шурпĕрех поражени тӳссине малтанах сисни, нимĕçсен вăхăтлăха пулнă çитĕнĕвĕсене пăхмасăрах, Германири халăха хурлантараççĕ тата хăратса ӳкереççĕ. Германи халăхĕн фашизма хăратнăçемĕн хăратса пыракан çав шухăш-кăмăлĕсене путарса лартас тесе, Хĕвелтухăç фронтĕнчи çапăçусенче хытă çĕмĕрнĕ тата хĕллехи йывăр кампани умĕнче тăракан нимĕçсен нумайĕш çар чăçĕсен вăрçас хастарлăхĕ чакса кайнине ӳстерес тесе, гитлеровецсем кĕле кĕриччен халичченхинчен витĕмлĕрех çитĕнӳсемпе çĕнтерӳсем тăвассишĕн ниме те пăхмасăр тăрăшса пăхĕç. Хĕрсе кайсах картла вылякан çын пек, Гитлер хальхи вăхăтра хăйĕн мĕнпур çарне тенĕ пекех, питĕ нумай танксене, хăйĕн пĕтĕм авиацине пире хирĕç кăларса тăратать. Нимĕçсем оккупациленĕ çĕршывсенчи хăйсен войскисенчен пысăк пайне Хĕвелтухăç фронтне ячĕç, çав войскăсем вырăнне унта стариксене е инвалидсене тăратса хăварчĕç. Нимĕçсем питĕ нумай вооружени пухрĕç. Нимĕçсен хăйсен завочĕсемсĕр пусне, Гитлер çарĕсем валли оккупациленĕ çĕршывсенчи — Чехословакири, Францири, Бельгири заводсем те ĕçлеççĕ, вĕсен шутĕнче Шкода, Крезо, Рейно, Гочкинс завочĕсем пек çавтери пысăк заводсем пур.

Вăрçăри вăйсене пирĕнниччен ытларах туса хурас тесе, нимĕçсем хăйсен юлашки вăхăтри атакисенче хăйсен мĕнпур техникине, оккупациленĕ çĕршывсенче тытса илнĕ танксем таранах, пире хирĕç кăларса тăратрĕç.

Совет Информаци Бюровĕн октябрĕн 7-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерĕвĕнче кăтартса панă пек, «октябрĕн 7-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противника хирĕç пĕтĕм фронтра вăйлă çапăçусем туса пынă, Вязьма тата Брянск енĕсенче уйрăмах хаяр çапăçусем пулнă». Юлашки кунсенче Вязьма тата Брянск енĕсенче нимĕçсем çĕнĕрен наступлени тума пуçларĕç. Пурте пĕлетпĕр, сентябрь уйăхĕн пуçламĕшĕнче нимĕçсем нумай танксем ярса Брянск патне тухма пăтланнă, тата çавăн чухне Брянск патне пымалли çулсем çинче Гудериан танковăй группин икĕ виçĕмĕш пайне çити сухатнă. Халĕ нимĕçсен фашистла захватчикĕсем Брянск тата Вязьма енче хăйсен авиацийĕн, бронетанковăй войскисен тата пехотин чылай вăйĕсене çапăçăва кĕртсе ячĕç. Гитлеровецсем пирĕн оборонăна татса кĕресшĕн, çав оборонăн ăшне шалалла кĕрсе каясшăн, тата, çухату пысăк пулма пултарасси çине пăхмасăрах, çĕршывăн çавтери кирлĕ промышленноçлă центрĕсем патне кĕрсе каясшăн.

Халĕ хаяр çапăçусем пыраççĕ.

Нимĕçсем çапăçăва хăйсен резервисене кĕртсе, Итали, Венгри, Финляндри войскисене хута ярса, вăй тĕлĕшĕнчен чылай участоксенче пирĕнтен йышлăрах пулса тăчĕç тата çакна пула темиçе тĕлте пирĕн войскăсем тăракан вăрăнсене хĕсĕнсе кĕчĕç. Нимĕçсем малалла куçса пынин кашни утăмне хирĕç пирĕн войскăсем хаярран çапăçаççĕ, тата тăшманăн çав кашни утăмшăнах çĕнĕрен те çĕнĕрен йывăр сухатусем тӳсме тивет. Çапла, тĕлĕнерен, октябрĕн 4—5-мĕшенче кăна Брянск тата Вязьма енĕсенче пирĕн авиаци фашистсен 113 танкне тата пехота ларса пыракан 250 автомашинине пĕтерсе тăхнă. Çак енчи районсенчен пĕринче пирĕн çаксем тăшманăн 65 танкне пĕтерсе тăхнă.

Тăшман калама çук пысăк сухатусем тӳсет. Анчах та нимĕçсен фашистла захватчикĕсем пирĕн войскăсене хĕссе çитĕсӳ тума пултарчĕç. Хаяр çапăçусем хыççăн пирĕн войскăсем Орел хулинчен тухса кайрĕç. Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем çĕнĕрен наступленине пуçлама тăтланнă май пирĕн тăван çĕршывăн çавтери кирлĕ промышленноçлă центрĕсем умне тухса тăнă хăрушлăх мĕнтери пысăкшине хакламасăр тăни каçарма çук çăмăлттайла шухăплани пулнă пулĕччĕ. Сталин юлташ 1941 çулпи июлĕн 3-мĕшĕнче каланă сăмахĕнче панă питех те кирлĕ кăтартусем çинчен мĕнпур совет çыннисене халĕ татах та татах тепĕр хут астутарас пулать. 1941 çулти июлĕн 3-мĕшĕнче Сталин юлташ çапла каларĕ:

«Чи малтан çакă кирлĕ: пирĕн çынсем, совет çыннисем, пирĕн çĕршыв умне тухса тăнă хăрушлăха пĕтĕмĕшпех ăнланса илмелле, йăваш чунлă пулма, тимĕрлĕхлĕ пулма пăрахас пулать, мирлĕ строительство вăхăтĕнчи шухăш-кăмăлсене пăрахас пулать; вăл шухăш-кăмăлсем вăрçăнченхи вăхăтра пулма пултарнă, анчах хальхи вăхăтра, положение вăрçă тĕпренех улăштарнă чухне, вĕсем пысăк никеç кӳме пултараççĕ. Тăшман хаяр та сĕмсĕр. Вăл эпир тар юхтарса ĕçленĕ çĕрсене туртса илес, хамăр вăйпа ĕçлесе тунă тырпула тата нефте туртса илес тĕллеве лартать. Вăл помещиксен власне каялла тавăрас, царизма каялла тавăрас, вырăссен, украинецсен, белоруссен, литовецсен, латышсен, эстонецсен, узбексен, тутарсен, молдавансен, грузинсен, армянсен, азербайджанецсен тата Совет Союзĕнчи ытти ирĕклĕ халăхсен нацилле культурипе нацилле государственноçне пĕтерсе хурас тĕллеве лартать, вĕсене немĕçлетес, вĕсене немĕç князьсемпе баронĕсен чурисем туса хурас тĕллеве лартать. Çапла вара, ĕç Совет государствин пурнăçĕпе вилĕмĕ çинчен, ССР Союзĕнчи халăхсен пурнăçĕпе вилĕмĕ çинчен, Совет Союзĕнчи халăхсем ирĕклĕн пурăнасси, е вĕсем чуралăха кĕрсе ӳкесси çинчен пырать».

Гитлерла Германие хирĕç пыракан хальхи вăрçăра вăтаçĕрĕ çуккине советăн кашни гражданинĕ ăнланса илмелле тивĕç: е фашистла Германие çĕмĕрсе тăкăпăр, е нимĕçсен фашистла бандичĕсем Совет Союзĕнчи халăхсене нумай çулсем хушши чи тискер майсемпе пĕтерсе пырĕç, пусмăр айĕнче усрĕç.

Фахтсем тăрăх, оккупациленĕ çĕршывсенче тата вăхăтлăха йышăннă совет районĕсенче нимĕçсен фашистла вăрăхурахĕсем хăйсене тискер-кайăкла тытканлани тăрăх кашни рабочи, кашни хресчен, интеллигент кĕрешӳ мĕнтĕр пынине, Германи фашизмĕ çĕнтерес пулсассăн ăна тата унăн ачисене мĕн кĕтнине пĕлсе тăтăр.

«Совет çыннисен çакна ăнланса илмелле те, тимлĕхсĕр пурăнассине пăрахмалла, вĕсен хăйсене мобилизацилемелле тата хăйсен пĕтĕм ĕçне урăхлатса, вăрçă вăхăтĕнчи пек, çĕнĕ йĕркене туса пымалла, тăшмана касару пулмалла мар»—тесе вĕрентет пире Сталин юлташ.

Пирĕн çĕршыв умне тухса тăнă хăрушлăха вĕçне çитиех ăнланса илмелле тени вăл хăраса ӳкмелле, çухалса каймалла тенине пачах та пĕлтерместъ. Йăлтах урăхла, хăрушлăха ăнланса илни кашни совет гражданинĕн вăйхăватне татах та ытларах ӳстермелле. Эпир пĕлетпĕр, Ленинграда пата Одесса хулисене паттăрлăн хӳтлекенсем фашистсене хирĕç е пурнăç, е вилĕм тесе çапăçнă хаяр самантра оборонăшăн тăвакан ĕçре те, тăван хуласем патне пымалли вырăнсенче алла хĕçпăшал тытса кĕрешнĕ çĕрте те тĕлĕнмелле геройлăхпа хастарлăх кăтартса параççĕ. Кашни совет çынни, уйрăмах хăрушлăх ӳссе пынă самантра, хăйне çапла тытмалла.

1919 çулти октябрь уйăхĕнчи хаяр кунсенче, Юденич шурă гвардийĕн йыткĕтĕвĕсем Ленинград патне çывхарса пырсан, Деникин Орел хулине тытса илсе Тула патне талпăнса пыма тытăнсан, аслă Ленин мобилизацилеме рабочисене чĕнсе хăйĕн сăмахĕнче çапла калать:

«Положени питех те йывăр. Анчах та эпир шикленсе ӳкместпĕр, мĕншĕн тесен эпир пĕлетпĕр, совет республикишĕн йывăр положени килсе тухсан кашнинчех рабочисем тĕлĕнмелле хастарлăхпа паттăрлăх кăтартаççĕ, хăйсен примерĕсемпе войскăсене вăй кĕртсе хавхалантараççĕ тата вĕсене çĕнĕ çĕнтерӳсем патне ертсе каяççĕ».

Обстановкăн пĕтĕм йывăрлăхне тата пирĕн тăван çĕршыв умне тухса тăнă пысăк хăрушлăха вĕçне çитиех ăнланса илмелле, йăваш чунлă пулма, тимĕрлĕхлĕ пулма пăрахмалла, лăпланса ларассине пĕтермелле, сĕмсĕр те ирсĕр тăшманăн çĕнĕ атакисене сирсе ярас тесе пĕтĕм вăя мобилизацилемелле, пĕтĕм вăй-хăвата çĕнтерӳ тунă çĕре памалла—çакă вăл мĕнпур партипе совет организацийĕсен, мĕнпур совет çыннисен черетре тăракан задачи.

(«ПРАВДА» хаçатăн октябрĕн 9-мĕшĕнчи умстатьи).

Совет Информаци Бюровĕнчен

Октябрĕн 9-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Октябрĕн 9-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противника хирĕç пĕтĕм фронтра çапăçусем туса пынă, Вязьма, Брянск тата Мелитополь енĕсенче уйрăмах хаяр çапăçусем пулнă.

Октябрĕн 7-мĕшĕнче нимĕçсен 34 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 17 самолет пĕтнĕ.

* * *

Нимĕçсен 25 самолечĕ Мурманск хули çине тапăнма хăтланнă, анчах та Кузнецовпа Головня юлташсен авиачăсĕнчи летчиксем нимĕçсене каялла хăваласа янă. Сывлăшри çапăçусенче противникăн 8 самолетне персе антарнă. Парашютсемпе аннă фашистсен 9 летчикне тытăна илнĕ.

* * *

Фронтăн Хĕвеланăç енчи участокĕсенчен пĕринче пирĕн оборона линийĕ витĕр кĕрсе кайса, нимĕçсем çапăçăва мотомеханизированнăй войскăсен пысăк группине кĕртсе янă. Противник хĕссе пынине сирсе ярса, Катуков полковникăн чăн фашистсене чылай сиен кӳнĕ. Танксен çапăçăвĕ вăхăтĕнче нимĕçсем 30 ытла танк, противотанковăй 19 оруди расчетсемпе пĕрлех тата пехота ларса пынă 9 грузовик, пĕр зенитнăй батарея, пĕр йывăр оруди çухатнă тата 400 салтак вилнĕ.

* * *

Пирĕн часть фронтăн Кăнтăр-Хĕвеланăç енче противникăн хаяр атакисене сире-сире ярса, виçĕ кун хушши пынă çапăçусенче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 500 çын ытла, 7 танк, орудисем, минометсем тата пехота ларса пыракан автомашинăсем нумай пĕтерсе тăкнă. Пирĕн войскăсем нимĕçсен тĕрлĕ калибрлă юсавлă 16 орудине, пĕр зенитнăй установкине, нумай автомашинисемпе мотоциклĕсене, 5 тракторне, минăсем, снарядсем, патронсем тата тĕрлĕрен çар пурлăхĕ нумай тытса илнĕ.

* * *

Фронтăн Кăнтăр-Хĕвеланăç енче нимĕçсем оккупациленĕ районсенчен пĕринче П. юлташ ертсе пыракан партизансен отрядĕнчи боецсем фашистсене хыттăн пыра-пыра çапаççĕ. Нумаях пулмасть, партизансем Т. поселокне каймалли çул çине минăсем хурса тухнă, унтан поселокра боеприпассем усракан склада тивертес янă. Нимĕçсем, хăйсен машинисене васкасах илсе тухма тытăнса, минăсем хурса тухнă участока пырса тăрăннă. Минăсем çурăлса кайнипе 4 танк, 3 çăмăл машина тата икĕ грузовой автомашина çĕмĕрлĕнĕ. Партизансем Вологодарский ячĕпе тăракан совхоз районĕнче помещик—нимĕç баронĕ фон-Биндерлинг тавăрăнса пурăнма вырнаçнă çурта тата армана тивертес янă.

Çав районрах кĕрешекен, М. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячĕ пысăк участок çинче чугунçул линийĕсене пăсса тăкнă, нимĕçсен 3 офицерĕ ларса пыракан дрезинăна, боеприпассемпе горючи тиенĕ 5 грузовой автомашинăна, минометлăй установкăсем тиенĕ икĕ машинăна, штабри офицерсемпе чиновниксем ларса пыракан 7 çăмăл автомашинăна пĕтерсе тăкнă. Партизансем 19 вырăнта сыхăну линийĕсене пăснă.

* * *

Иван юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячĕ фронтăн Хĕвеланăç енче нимĕçсем оккупациленĕ районсенче фашистсен чăсĕсене кăнтăрла та çĕрле те канăç памасть. Отрядри разведчиксем çак кунсенче командира нимĕçсен пысăк чăсĕн штабĕ пĕр ялтан тепĕр яла куçни çинчен пĕлтернĕ. Командир нимĕçсен штабĕн пĕр машинине тытса илме шут тытнă. Партизансем икĕ пулеметпа тата гранатăсемпе хĕçпăшалланса, çул хĕррине вырнаçса выртнă. Штаб машинине 100 метра çити çывăха ярса, пулеметчиксем ун çине тĕл пеме пуçланă. Нимĕçсен офицерĕ, шоферĕ, салтакĕсем тата мотоциклисчĕ машинине пăрахсах вăрманалла тарнă. Партизансем штаб документĕсене тытса илнĕ, машинине çунтарса янă.

Нумаях та пулмасть, отряд нимĕçсен автоколоннине йĕрлесе тупнă. Çав колонна патне çитесси 150 метр юлса тата, партизансем фашистсем çине пулеметсенчен вăйлăн пеме пуçланă. Противникăн обмундировани тата тĕрлĕрен çар пурлăхĕ тиенĕ темиçе грузовикне çĕмĕрнĕ. Нимĕçсен отрядне хирĕç ал вĕçĕн çапăçнă вăхăтра партизансем тăшманăн 8 салтакне вĕлернĕ.

Тăшманăн пысăках мар аэродромĕ çине çĕрле пырса тапăнни уйрăмах ăнăçлă пулнă. Партизансем нимĕçсен часовойĕсене шăпăн вĕлернĕ те, горючи тултарнă бутылкăсем ывăтса, тăшманăн аэродромра ларнă икĕ самолетне пĕтерсе тăкнă. Партизансем 19 вырăнта сыхăну линийĕсене пăснă.

Октябрĕн 10-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Октябрĕн 10-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противника хирĕç пĕтĕм фронтра çапăçусем туса пынă, Вязьма тата Брянск енĕсенче уйрăмăнах вăйлă çапăçусем пулнă.

* * *

Фронтăн Хĕвеланăç енчи участокĕсенчен пĕринче пирĕн пĕр часть, противникăн хаяр атакисене сире-сире ярса, виçĕ кун хушшинче нимĕçсен 65 танкне тата пин ытла салтакне пĕтерсе тăхнă. Фронтăн çак енчех фашистсен икĕ батальон ӳсĕр салтакĕсем урса кайсах пирĕн чăсĕм çине атакăна кайнă. Пирĕн войскăсем, хăвалăн персе тăрса, нимĕçсен колоннине çапса аркатнă, наступленипе тăвакансен пысăк пайне пĕтерсе тăхнă.

* * *

Фронтăн Хĕвеланăç енчи участокĕсенчен пĕринче пирĕн самолетсен группи противникăн наступленипе туса пыракан войскисем çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсене тĕл пăрахса тата пулеметсенчен персе, нимĕçсен çынсем тата вооруженипе тиенĕ 54 автомашинине, миномет сен 6 батарейине, артиллерин 3 батарейине пĕтерсе тăкнă. Фронтăн Хĕвеланăç енчи тепĕр участокĕнче пирĕн самолетсем çинчен бомбăсем пăрахнипе нимĕçсен 13 автомашинине, 4 орудине тата миномет сен пĕр батарейине çĕмĕрсе тăкнă, горючи усракан складне взрыв туса сирпĕнтерсе янă тата противникăн пехотине икĕ рота ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Кăнтăр фронтĕнчи участоксенчен пĕринче пирĕн самолетсен группи, противникăн войскисене наступленипе тума чарса тăрса, противник пехоти ларса пыракан тата боеприпассем тиенĕ 56 автомашинине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Фронтăн Сурçĕр-Хĕвеланăç енче нимĕçсем оккупациленĕ районсенчен пĕринче П. юлташ ертсе пыракан партизансен отрядĕнчи боецсем фашистсене хыттăн пыра-пыра çапаççĕ. Нумаях пулмасть, партизансем Т. поселокне каймалли çул çине минăсем хурса тухнă, унтан поселокра боеприпассем усракан склада тивертес янă. Нимĕçсем, хăйсен машинисене васкасах илсе тухма тытăнса, минăсем хурса тухнă участока пырса тăрăннă. Минăсем çурăлса кайнипе 4 танк, 3 çăмăл машина тата икĕ грузовой автомашина çĕмĕрлĕнĕ. Партизансем Вологодарский ячĕпе тăракан совхоз районĕнче помещик—нимĕç баронĕ фон-Биндерлинг тавăрăнса пурăнма вырнаçнă çурта тата армана тивертес янă.

Çав районрах кĕрешекен, М. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячĕ пысăк участок çинче чугунçул линийĕсене пăсса тăкнă, нимĕçсен 3 офицерĕ ларса пыракан дрезинăна, боеприпассемпе горючи тиенĕ 5 грузовой автомашинăна, минометлăй установкăсем тиенĕ икĕ машинăна, штабри офицерсемпе чиновниксем ларса пыракан 7 çăмăл автомашинăна пĕтерсе тăкнă. Партизансем 19 вырăнта сыхăну линийĕсене пăснă.

* * *

Нимĕçсем оккупациленĕ Югослави хулисемпе ялĕсенче фашистсене хирĕçле движени кунран кунах сарăлса пырать. Нимĕçсем йышăнса илнĕ хуласене Югослави патриочĕсенчен тăракан партизансен пысăк отрячĕсем хупăрласа илеççĕ тата Германи войскисен стратегиллĕ объекчĕсем çине пыра-пыра тапăнаççĕ. Валево, Шабац тата Обреновац хушшинчи лини çинче оккупантсен войскисемпе партизансен отрячĕсем хушшинче вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Партизансем Валево хулине хупăрласа илнĕ. Хула патĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче нимĕçсен темиçе çĕр салтакĕсемпе офицерĕсене тыткăна илнĕ. Нимĕçсенчен туртса илнĕ Ужице хулинче партизансем çар материалĕсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Голландири нумайĕш хуласенче демонстрацисем пулса иртеççĕ, тата Голланди патриочĕсем национал-социалистсене тата нимĕçсен полицине хирĕç çапăçаççĕ. Голландири ĕççыннисем диверсисем тата саботажсем нумай организацилеççĕ. Роттердама тата Амстердама пушарсемпе взрывсен пулнипе судостроительнăй тата металлурги заводĕсене пысăк сиен кӳнĕ. Бреда, Девентер тата Алмело районĕсенче пушарсем пулнипе çар склачĕсенчи тĕштырă запасĕсем пĕтнĕ. Продовольствие Германие ăсатас ĕçе хресченсем пур майсемпе те чăрмантараççĕ. Нимĕçсем тытса илнĕ предприятисенче ĕç хăвăртлăхĕ куллен кунах чакса пырать.

* * *

Тăшмана хăвăртрах çапса аркатма кирлĕ чĕртăвара материалл хаклăхсене тата государство средствисене совет çĕршывĕнчи ĕççыннисем çирĕппĕн перекетлесе пыраççĕ. Горькири Молотов ячĕпе тăракан автомобиль заводĕнче ку таринччен кăмакасене мазутпа хĕртнĕ пулнă, халĕ ун вырăнне производствăран юлакан смалапа усă кураççĕ. Вăрçă пуçланăранпа Павлов хулинчи Жданов ячĕпе тăракан заводра халиччен ĕçлемесĕр тăнă 50 ытла станока çĕнĕрен ĕçе янă тата урăхлатса лайăхлатнă. Краснодар тата Белореченски деповĕсенчи паровоз бригадисем, пысăк пахалăхлă мар кăмăрăк тата шлакоотсев çунтарса, усă топливăна нумай перекетленĕ. Краснодар деповĕнчи машинист Мамот юлташ икĕ уйăх хушшинче пĕр вагон топливо перекетленĕ. Горький-Пассажирская деповĕнчи машинистсем уйăх хушшинче 424 тонна кăмăрăк перекетленĕ. Калинин ячĕпе тăракан шахта коллективĕ çĕнĕрен икĕ лавăна ĕçе хатĕрленĕ, вĕсене çĕнĕрен юсанă рештаксемпе, приводсемпе тата врубовой машинăсемпе оборудовани тунă. Сталинабад облаçĕнчи нефтепромыслăсенчи старший инженер Болотов юлташ нефть кăларнă чухне бензин газĕ çухаласран сыхланмалли çĕнĕ май шухăшласа тупнă. Болотов юлташăн сĕнĕвĕ государствăна миллион çурă тенкĕлĕх перекет парать.

Артель членĕсен хастарлăхĕ

ЕТĔРНЕ. Пушнарти Чкалов ячĕпе тăракан промартель хăйĕн производствăллă планне уйăхран уйăха, кварталтан квартала ытлашшипех тултарать. Ку квартăлта та плана ытлашшипех тултарма шутлаççĕ. Артель кăларакан продукцин пахалăхĕ те лайăхлансах пырать. Çĕвĕ цехĕ кăçал кăларнă пĕтĕм продукцие пĕрремĕш сортпа панă. Артельри рабочисемпе работницăсем стахановла ĕçлесе Хĕрлĕ Çара çĕнтерӳсем тума пулăшаççĕ.

Рабочисем хушшинче агитацилле-массăллă ĕçе те кирлĕ пек туса пыраççĕ. Кашни кунах вĕсене артельри агитаторсем Совет Информаци Бюровĕ паракан сводкăсене вуласа ăнлантараççĕ, отечественнăй вăрçă фронтĕнчи боевой эпизодсем, фабрикăсемпе заводсенчи, предприятисенчи ĕç тухăçлăхĕ ӳсни çинчен каласа параççĕ.

Артель хăйĕн членĕсенчен 13 çынна уборка ĕçĕ пĕтиччен таврари колхозсене пулăшма янă. Вĕсем, артельре стахановла ĕçлекенскерсем, уйхирте те пысăк тухăçлăхпа ĕçленĕ. Манефа Иванова—артельре лайăх ĕçлекенсенчен пĕри. Кашни уйăхрах плана 140—150 процент таран тултарса ĕçлет. Уйра та вăл куллен 350—360 кĕлте вырса сыхнă. Лидия Смирнова, Евдокия Фомичева стахановкăсем те кунсеренех 300-шер кĕлте вырса сыхнă.

Артельре ĕçлекенсем тăван çĕршыв оборонин фондне тăвас çĕрте те активлăн хутшăнаççĕ. Артель оборона фондне 800 тенкĕ укçа панă, колхозсене пулăшнă çĕрте ĕçлесе илнĕ ĕçкунĕсем пуçне тивекен тупăшсене панă.

Халĕ артельри рабочисемпе работницăсем пĕр-пĕринпе ăмăртса, тумтирсем çĕлеççĕ.

Н. ЦВЕТКОВ.

Италири пăлханусем

Турин тата Генуя хулисенче, çавăн пекех промышленноçлă центрсенче — Александрийăра, Наварăра тата Варчеллире халăх пăлханăвĕсем пуçланнă. Италин фашистла правительстви хăй канăççăрланса ӳкинине кăтартать. Италин хĕçпăшаллă вăйĕсене тата администрацийĕ системине контроль туса пыракан немĕçсем пăлханусене пусаççĕ. Правительство влияннийĕ хăвăрт ӳксе пырать. Итальянецсем кинотеатрсенче Муссолинине кăтартса паракан кинохроникăсем вăхăтĕнче шăхăраççĕ. (ТАСС).

Фронтшăн ĕçлесси—чыслă ĕç

Шупашкарти «Красный кустарь» артельри рабочисемпе работницăсем вăрçă условийĕсем ыйтнă пек ĕçлеççĕ. Октябрьти Социализмлă Аслă революци 24 çул тултаракан уяв умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, кунти работниксемпе работницăсем продукцие вăхăтра тата лайăх пахалăхпа туса кăларма обязательство илнĕ. Скорняжнăй цехри двухсотниксен ĕшĕ те ӳссех пырать. Ф. Тимаков, К. Колов, А. Акатов юлташсем нормăна 200-шер процент тултараççĕ. Упăшкисем вырăнне ĕçлекен хĕрарăмсем те ĕç техникине алла илеççĕ. Красноармеец арăмĕ Пономарева юлташ куллен хи нормăна тултаракан пулчĕ. Кройщица Сахарова артельре ĕçлеме пуçлани нумаях пулмасть пулин те, вăл нормăна 110 процент тултарать.

Артельри работницăсем, производствăра ĕçленисĕр пуçне, тĕрлĕрен кружоксене активлăн хутшăнаççĕ. Паянхи куна ПВХО нормине 35 çын, ГСО нормине 27 çын панă. Октябрь уявĕ çитес умĕн 27 çын ПВХО тата ГСО нормисене пама хатĕрленсе çитеççĕ.

Çак кунсенче артеле алсасем çĕлеме тепĕр задани панă. Стахановка П. Климова юлташ ку ĕç пирки çапла каларĕ:

— Пире кашнинех алсасем çĕлеме хушнă. Çакна эпир хаваслансах йышăнтăмăр. Хамăра шанса панă чыслăха тӳрре кăларăпăр. Эпир ку ĕçе ухсасăрах тăватпăр,—терĕ вăл.

Скорняжнăй цехри двухсотниксен ĕшĕ те ӳссех пырать. Ф. Тимаков, К. Колов, А. Акатов юлташсем нормăна 200-шер процент тултараççĕ. Упăшкисем вырăнне ĕçлекен хĕрарăмсем те ĕç техникине алла илеççĕ. Красноармеец арăмĕ Пономарева юлташ куллен хи нормăна тултаракан пулчĕ. Кройщица Сахарова артельре ĕçлеме пуçлани нумаях пулмасть пулин те, вăл нормăна 110 процент тултарать.

Артельри работницăсем, производствăра ĕçленисĕр пуçне, тĕрлĕрен кружоксене активлăн хутшăнаççĕ. А. Аникина, З. Царапина, О. Акатова, О. Кузнецов стахановецсем ĕç нормине куллен 167 процент тултараса ĕçлеççĕ.

Çак кунсенче артеле алсасем çĕлеме тепĕр задани панă. Стахановка П. Климова юлташ ку ĕç пирки çапла каларĕ:

— Пире кашнинех алсасем çĕлеме хушнă. Çакна эпир хаваслансах йышăнтăмăр. Хамăра шанса панă чыслăха тӳрре кăларăпăр. Эпир ку ĕçе ухсасăрах тăватпăр,—терĕ вăл.

Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту

Срокчен тата пысăк пахалăхпа

Çĕмĕрлери древкомбинатра производствăллă çĕнĕ çĕкленӳ пуçланчĕ. Цехсем, бригадăсем, сменăсем тата уйрăм рабочисемпе работницăсем Октябрьти Социализмлă Аслă революци XXIV çул тултаракан уява çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илессишĕн ăмăртăва сарса пыраççĕ. Капниех вĕсем хăйсем çине тăкнă обязательствăсем илнĕ.

Серов юлташ ертсе пыракан цех коллективĕ Мускаври Л. М. Каганович юлташ ячĕпе тăракан заводри рабочисем чĕнсе каланине ырласа, октябрь уйăхĕн планне 5 кун малтан, квартал планне декабрĕн 25-мĕшне тултарма, продукцин хăйне ларакан хакне 3 процент чакарма пулчĕ. Çавăнпа пĕрлех ку цехри рабочисемпе работницăсем Аслă уявччен пĕтĕм цеха двухсотниксен цехĕ тăвассишĕн, материалсене перекетлессишĕн, ĕç вырăнне тĕрĕс, таса тытса тăрассишĕн кĕрешеççĕ.

Иккĕмĕш номерлĕ цех коллективĕ те çавăн пек лайăх кăтартусемшĕн ăмăртăва тухрĕ. Вăл Октябрь уявĕччен цехра пур рабочисене те нормăна тултарса ĕçлекенсем тума пулать. Паянхи куна цехра ĕçлекенсенчен чылайăшĕсем нормăсене иртерсе тултараççĕ ĕнтĕ, двухсотниксен хисепĕ те хутшăнсах пырать.

Шустов юлташ ертсе пыракан цех сентябрь планне ытлашшипех тултарнă. Халĕ рабочисем Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, хăйсем çине октябрь планне 110 процентран кая мар тултарма, лайăх пахалăхлă продукци туса кăларма тата продукцин хăйне ларакан хакне йӳнетме обязательствăсем илчĕç. Ăмăрту анлăн сарăлса пырать. Уйрăм рабочисем 3—4 норма тултарса ĕçлеççĕ. Сăмахран, Козлов, Жирнов юлташсем уйрăм кунсенче нормăна 4 хут иртерсе тултараççĕ, столяр стахановец Иванов юлташ вăтамран илсен хăйне панă заданисене 3 хут иртерсе пурнăçлать. Вĕсен продукци пахалăхĕ те лайăх.

Данилов юлташ ертсе пыракан цехри рабочисемпе работницăсем те Октябрьти Социализмлă Аслă революци XXIV çул тултаракан уява ĕç тухăçлăхне ӳстернипе, планран иртерсе темиçе пин тенкĕлĕх продукци туса кăларнипе кĕтсе илме тăрăшаççĕ. Стахановецсем Степан тата Яков Кондратьевсем, М. Упряжков, Михайлова, Лопухов юлташсем кашни кун нормăна 2 хут иртерсе тултараççĕ. (Хамăр корр.).

Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту

Срокчен тата пысăк пахалăхпа

Çĕмĕрлери древкомбинатра производствăллă çĕнĕ çĕкленӳ пуçланчĕ. Цехсем, бригадăсем, сменăсем тата уйрăм рабочисемпе работницăсем Октябрьти Социализмлă Аслă революци XXIV çул тултаракан уява çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илессишĕн ăмăртăва сарса пыраççĕ. Капниех вĕсем хăйсем çине тăкнă обязательствăсем илнĕ.

Серов юлташ ертсе пыракан цех коллективĕ Мускаври Л. М. Каганович юлташ ячĕпе тăракан заводри рабочисем чĕнсе каланине ырласа, октябрь уйăхĕн планне 5 кун малтан, квартал планне декабрĕн 25-мĕшне тултарма, продукцин хăйне ларакан хакне 3 процент чакарма пулчĕ. Çавăнпа пĕрлех ку цехри рабочисемпе работницăсем Аслă уявччен пĕтĕм цеха двухсотниксен цехĕ тăвассишĕн, материалсене перекетлессишĕн, ĕç вырăнне тĕрĕс, таса тытса тăрассишĕн кĕрешеççĕ.

Иккĕмĕш номерлĕ цех коллективĕ те çавăн пек лайăх кăтартусемшĕн ăмăртăва тухрĕ. Вăл Октябрь уявĕччен цехра пур рабочисене те нормăна тултарса ĕçлекенсем тума пулать. Паянхи куна цехра ĕçлекенсенчен чылайăшĕсем нормăсене иртерсе тултараççĕ ĕнтĕ, двухсотниксен хисепĕ те хутшăнсах пырать.

Шустов юлташ ертсе пыракан цех сентябрь планне ытлашшипех тултарнă. Халĕ рабочисем Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, хăйсем çине октябрь планне 110 процентран кая мар тултарма, лайăх пахалăхлă продукци туса кăларма тата продукцин хăйне ларакан хакне йӳнетме обязательствăсем илчĕç. Ăмăрту анлăн сарăлса пырать. Уйрăм рабочисем 3—4 норма тултарса ĕçлеççĕ. Сăмахран, Козлов, Жирнов юлташсем уйрăм кунсенче нормăна 4 хут иртерсе тултараççĕ, столяр стахановец Иванов юлташ вăтамран илсен хăйне панă заданисене 3 хут иртерсе пурнăçлать. Вĕсен продукци пахалăхĕ те лайăх.

Данилов юлташ ертсе пыракан цехри рабочисемпе работницăсем те Октябрьти Социализмлă Аслă революци XXIV çул тултаракан уява ĕç тухăçлăхне ӳстернипе, планран иртерсе темиçе пин тенкĕлĕх продукци туса кăларнипе кĕтсе илме тăрăшаççĕ. Стахановецсем Степан тата Яков Кондратьевсем, М. Упряжков, Михайлова, Лопухов юлташсем кашни кун нормăна 2 хут иртерсе тултараççĕ. (Хамăр корр.).

Англире Совет Союзĕпе пĕр шухăшлă пулас движени ӳссех пырать

ЛОНДОН, октябрĕн 9-мĕш. (ТАСС). Пĕтĕм Англи тăрăх Англипе Совет Союзĕ хушшинчи сыхăнăва çирĕплетес ятпа митингсем нумай пулса иртрĕç. Стаффорд округĕнчи муниципалитетăн сурăнчче митинг пулса иртнĕ, вăл митинга хула мэрĕ председатель пулса ертсе пынă. Ораторсем хушшинче парламентăн вырăнта депутатĕ консервативлă партин представителĕ тухса сăмах калана. Англипе Совет Союзĕнчи сыхăнуп Стаффордри комитечĕ (унта обществăллă организацисен, профсоюзсен тата тĕн тытăкансен хулари пĕтĕм организацийĕсен представителĕсем кĕреççĕ) организацилеме митинг пĕр шухăшлă пулса çакăн пек резолюци йышăннă: «Стаффорд хулинчи халăхсен пĕтĕм сийĕсен представителĕсем шухăннă митинг Германи агрессорине çĕмĕрсе тăкас çĕрте ССР Союзне пулăпса тăма пулать».

Россендэлре (Ланкашир) пулнă митингра та Англипе Совет Союзĕн хушшинчи союза сăмахпа тата ĕçпе пурнăçа кĕртсе пыма пулса резолюци йышăннă.

Сыхăну работникĕсен пред-юнион исполкомĕ совет сыхăну работникĕсем патне саламлă сыру янă.

Почта контролерĕсен федерацийĕ (пурĕ 9.000 çын пĕрлештерсе тăрать) Совет Союзĕнчи почтăпа телеграф тата телефон сыхăнăвĕн работникĕсем патне салам янă тата нацистсен тиранине тата тăкăлăнах çĕнтерсе тăкма икĕ çĕршыври халăхсем вăй хурса кĕрешнĕ çĕрте пулăпса пыма сăмах панă.

Лафборо хулинчи (Лестершир) хĕрарăмсен кооперативлă организацийĕ совет хĕрарăмĕсем патне çакăн пек салам янă: «Мускавра антифашистла митинга пухăннă совет хĕрарăмĕсем чĕнсе калани пире çавтери хумхантарчĕ. Ленинград, Мускав, Одесса хулисенчи тата Совет Союзĕнчи мĕнпур хĕрарăмсене саламлатпăр. Çакна шантарса калатпăр: «Пирĕн рудниксенче, заводсенче ĕçлекен тата хĕçпăллăлă вăйсен ретĕнче тăракан упăшкасен, ывăлсен, пиччĕсемпе-шăллăмсен фашизма курайманлăхĕ татах ӳссе пырĕ».

Кентерберийский архиепископ тухса калани

ЛОНДОН, октябрĕн 9-мĕш. (ТАСС). Кентерберийский архиепископ приходсен конференцийĕнче сăмах тухса калана. Хальхи вăхăтра, тенĕ вăл, пирĕн шухăшсем вырăс уйăрĕсем çинче хăватлă вăрçă пыракан Хĕвелтухăçĕнче. Унта пĕтĕм тĕнчери ирĕклĕхшĕн геройла хăюлăхпа тата çирĕплĕхпе кĕрешӳ пырать. Эпир хамăран çĕнĕ союзниксем тивĕçлипе мухтанма пултаратпăр.

Эпир çакна астуса тăмалла: Россия кĕрешĕвĕ—пирĕн тĕрешӳ пулса тăрать, вырăссем хăйсен ирĕклĕхне халĕ сыхласа хăварнă шур çĕршывсемшĕн те, чура туса хунă çĕршывсемшĕн те кĕрешеççĕ. Вĕсем ылханлă тиранне çĕмĕрсе тăкассишĕн кĕрешеççĕ. Пирĕн противника пырса çапса вырăссем çĕнтерӳ тунишĕн тата Германин ултавлă та хаяр çар машинине сиен кӳнĕшĕн эпир вырăссене тавтумалла. Вырăссем паттăрлăхпа хăюлăх кăтартнăшăн пирĕн вĕсене май çитнĕ таранах пулăшу памалла. Малалла архиепископ çапла каланă: Англи правительстви çак пулăшăва парас пирки хăйĕн вăйĕ çитнĕ таран пурне те тума сăмах панă, тенĕ.

Германи генералĕсене персе вĕлерни çинчен Америка корреспонденчĕ мĕн çырать

НЬЮ-ИОРК, октябрĕн 9-мĕш. (ТАСС). Оверсис ньюс агентствин корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Германин политикăпа çар сыннисемпе сыхăнса тăракансем пĕлтернĕ тăрăх, Германин Норвегири тинĕс çар вăйĕсен главнокомандующийĕ пулнă Бем адмирала тата фон Шредер генерала, нумай пулмасть, Гитлер приказĕ тăрăх вĕлернĕ. Бем вилнĕ çинчен вăл хăйне хăй вĕлернĕ пек туса пĕлтернĕ. Анчах та ăна фон Фалькенхорст генералпа туслă сыхăнусем тытса тăнăшăн перçе вĕлернĕ, тесе пĕлтереççĕ. Фон Фалькенхорст генерала Финляндри фронтне ăсатнă, вăл унта «тăван çĕршывшăн вилнессе» кĕтеççĕ. Фон Шредер вилни çинчен вăл авиацире катастрофа пулнă чух вилнĕ, тесе пĕлтернĕ. Кунти сведенисем тăрăх, Гестапо фон Гаммерштейн тата Штюльпнагель генералсене тата çавăн пекех Германи банкĕн руководителĕсенчен пĕрне Пуля вĕлерме палăртса хунă. Корреспондент сăмахĕсем тăрăх, Гитлер çак сыпсенчен хăтăласшăн, мĕншĕн тесен вĕсем Совет Союзне хирĕçле вăрçа хирĕç тăнă. Гитлер Совет Союзне хирĕçле кашшани арканса кайс пулсан государство переворочĕ пулассинчен хăрать.

Польша, Чехи тата Югослави хулисем Германин аманнă салтакĕсемпе тулса ларнă

НЬЮ-ИОРК, октябрĕн 9-мĕш. (ТАСС). Нумаях пулмасть, Польшăра, Чехире тата Югославире пулнă пĕр американец çапла пĕлтернĕ: çав çĕршывсенчи пысăк хуласем пурте Германин аманнă салтакĕсемпе тулса ларнă. Варшава хули пĕтĕмпех госпиталь евĕрлĕ пулса тăнă. Хулари сыпсене пысăк çуртсенчен кăларса яраççĕ, вăл çуртсене госпитальсем туса хураççĕ. Польшăра Германин хирĕçле движени тата саботажла ĕçсем тăвасси кашни кунах ӳссе пырать. Террора çавтери вăйлăн сарса янă пулсан та, Польшăра вăрттăн 170 хаçат тухса тăрать. Нимĕçсене курайманлăх кашни утăмрах сисĕнет.

Англи авиацин ĕçĕсем

ЛОНДОН, октябрĕн 9-мĕш. (ТАСС). Англири информаци министерстви çапла пĕлтерет: октябрĕн 6-мĕшĕнче вĕçленнĕ эрне хушшинче, Англин сывлăш. çар вăйĕсем пысăк операцисем тунă. Уйрăмăнах авиаци Германи порчĕсем çинче тата оккупациленĕ Франци тĕлĕнче, çавăн пекех Бенгази районĕнче хăйĕн пысăк активлăхне кăтартнă. Бомбардировщиксен пысăк соединенийĕ эрне хушшинче икĕ хутчен Гамбург тата Штеттин çине пырса тапăннă. Сентябрĕн 30-мĕшĕнче Шербург çывăхĕнче авиаци противникăн пароходне сиенленĕ. Çав куннех Норвеги çыранĕнче противникăн пĕр вăтам судни çине торпеда янă. Тепĕр кунне Голланди çыранĕсенче бомба тӳрех пырса ӳкнипе пысăк грузовой парохода çĕмĕрнĕ, вăл каравансен составĕнче пынă пулнă; тепĕр пароход бомбăсем лекнипе сунса кайнă. Октябрĕн 1-мĕшĕнче каçхине Англи самолечĕсем Франци çыранĕсем çывăхĕнче Германин хăвăрт сӳрекен 8 катерне атакăлана. Летчиксем пĕр катерăн команди шыва сикнине сăнанă, тепĕр катерне вут хыпса илнĕ. Октябрĕн 2-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи самолечĕсем Фризски утравĕсем патĕнче пĕр судно çине бомбăсем пăрахнă. Вăл пароход çунса кайнă. Тепĕр кунне Дюнкерк çывăхĕнче каллех пĕр пароходе çунтарса янă. Октябрĕн 3-мĕшĕнче Англи самолечĕсем Гравелин çывăхĕнче противникăн ПВО 7 караплĕ сыхласа пыракан суту-илӳ пароходне тупнă. Англи караплĕсем çав каравана атакăланă. ПВО-н пĕр карапне шыва путарнă, 3 карапа вут тивертсе янă, ыттисене пысăк сиен кӳнĕ. Остенде çывăхĕнче пĕр тральщика путарнă тата иккĕшне сиенленĕ. Атлантика океанĕнче Англи карапĕ Германи суту-илӳ пароходне путарнă.

Сӳлте кăтартнă эрне хушшинче Англи самолечĕсем Бенгази гавань тата унти суднăсем çине пилĕк хутчен пырса бомбăсем пăрахнă. Бардия çине виçĕ хутчен бомбăсем пăрахнă. Триполи портĕнче пысăк танкере тивертсе янă. Кунсăр пуçне татах икĕ судно çине бомбăсем тĕл пырса тивнине палăртнă.

Англин подводнăй лодкисем Вăтаçăр тинĕсĕнче хăйсен пысăк активлăхне кăтартнă тата вĕсем чылай çитнӳсем тунă.

Греции лару-тăру çивĕчленни

Грецире лару-тăру ытла та çивĕчленсе çитнĕ. Афины тата Солоники хулисем хушшинчи чугунçул сыхăнуне нумай пулмасть чарса лартнă. Афины хулинче 40 студента саботажлăн айăпласа асаплантарса вĕлернĕ. Крит утравĕ çинче хăйсем çумĕнче хĕçпăпал тупнă çынсене массăллăн вĕлернĕ. Ретимни хулинчи полици начальникне вăл Германия çĕмĕрсе кĕнĕ чухне Крит оборонине хутшăннă çынсене тытса паманшăн асаплантарса вĕлернĕ. Крит утравĕ çинче Германипе Италли войскисем хушшинче тытăсусем пулса иртнĕ. Итальянецсем Хĕвелтухăç фронтне тухса кайма килĕшмен. Тытăсусенче нумай жертвăсем пулнă.

(ТАСС).

„Пăшăлти“

Провокацилле листовкăсем салатнипирĕн фронтпа тыла дезорганизацилеме хăтланакан Германи фашисчĕсен юратнă меслечĕсенчен пĕри пулса тăрать. Запасри Н-ски сапернăй батальонри парикмахер-красноармеец Александр Небойков, тĕрлĕрен сăмахсемпе «çĕнĕ хыпарсене» итлеме юратаканскер, фашистла бандитсемшĕн çĕртен тупнă япала вырăннех пулса тăнă. Вăл фашистсем килсе пăрахнă 5 листовкăна пуçтарса илнĕ те, вĕсене командовани аллине парас вырăнне, хăйĕн çумне чиксе.

Хăйĕн нумай йышлă клиенчĕсен пичĕсене супăнь кăпăкĕ çĕрнĕ хушăра вăл вĕсемпе çанталăк çинчен, ытти тĕрлĕрен ĕçсем çинчен калаçнă.

— Канĕçрлемест-и?—вĕçленĕ вăл хăйĕн калаçăвне, классикаллă профессиллĕ пăту парса.

Хăйĕн пекех «çĕнĕ хыпарсене» итлеме юратакан çынна тупнă хыççăн вăл çапла пăтнă:

— Пĕлетĕр-и эсир, нимĕçсем хăйсен листовкисенче мĕн çыраççĕ? Шăп! Эпĕ сире халех кăтартатăп...

Небойков кĕсъерен листовкăсем турtса кăларнă та вĕсене пурин çинчен те шĕлме юратаканскер пенипе, парикмахер государство умĕнче уççăнах преступлени тăвать, тесе шутланă вăл. Вăл çакăн çинчен командованине каласа панă. Парикмахера арестленĕ. Арестленĕ чухне унăн сумĕнче фашистсен виçĕ листовкине тупнă.

Военнăй трибуналăн сучĕ умне тăнă Небойков фашистсен çав листовкисене хăйĕн сумĕнче усранăшăн хăйне айăплă тесе йышăннă.

— Фронтра эпĕ виçĕ листовка тупрăм та, вĕсене вуламасăрах хамăн кăсъене чикрĕм,—тесе хушса хунă вăл.

— Эсир малтан пилĕк листовка тупрăм тесе каларăр. Тепĕр иккĕшĕ ăçта?

— Çапла... эпĕ чăнах та пилĕк листовка тупрăм, анчах вĕсенчен иккĕшне çĕтсе пăрахрăм.

— Çав листовкăсене сыхласа усрама тата салатма юраманни çинчен сире кам та пулсан кăтартса паман-и?—тесе ыйтнă председатель.

— Пĕррехинче,—ответленĕ Небойков,—эпир виçсĕмĕр хушăра листовкăсем çинчен калаçнă чухне, çаканта пулнă кĕçĕн сержант Петров мана листовкăсене ыранах командовани аллине пама хушрĕ, анчах та эпĕ вĕсене пама ĕлкĕреймерĕм...

Мускав Çар Округĕнчи военнăй трибунал Александр Небойков ĕçне пăхса тухса, Небойкова 10 суллăха тĕрмене хупма, унтан тухсан 5 сул хушши сасă прависĕр хăварма постановлени йышăнчĕ. Военнăй трибунала председатель пулса ертсе пыраканĕ 3-мĕш рангри военюрист Смантович юлташ, военнăй трибуналăн членĕсем—3-мĕш рангри военюрист Пасюков юлташ тата военюрист Сиверов юлташ, секретарĕ—1-мĕш рангри техник-интендант Антимонов юлташ пулнă.

(«Правда», октябрĕн 9-мĕш).

Чехословакире гитлерла террор алхасать

НЬЮ-ИОРК, октябрĕн 9-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин Лондонри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: гестапо çынвĕлеренĕ Гейдрих чех халăхне тискеррĕн асаплантарасси халĕ те чарăнмасть. Прагăран илнĕ сведенисем тăрăх, специальнăй суд 33 çынна вĕлермелле приговор йышăннă. Паллă пулса тăнă тăрăх, октябрĕн 3-мĕшĕнче военно-полевой суд, «гестапона хирĕç преступленисем тунăшăн» тесе айăпласа, 131 чехăн ĕçне пăхса тухнă. Юлашки уйăхсенче Чехин сăрт-ту рудин районĕсенче пăлханусем вăйланса кайнă, çакă вара çĕркăмăк кăларассине пысăкăн чакарнă. Корреспондент çапла пĕлтерет: Гейдрих пуçламĕш шкулсене нумайĕшне хупма приказ панă, чехсен 35.000 ачине вĕренӳрен татса хăварнă. Чехсен 8.000 ачине ситес вăхăтрах ĕçлеме Германие ăсатмалла тунă.

ЛОНДОН, октябрĕн 9-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Прагăран пĕлтернĕ тăрăх, Прагăпа Брно хулисенче татах 6 çынна асаплантарса вĕлернĕ. Асаплантарса вĕлернисене государствăллă изменăшăн, экономикăллă саботажшăн тата хĕçпăпала законсăр усранăшăн тесе айăпланă.

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ. Укерчĕн çинче: Боецсем каннă вăхăтра. Сылтăмра таджик У. Аминов нацийĕ инструментпа кĕвĕ калать. Л. Великжанин фотоӳкерчĕкĕ. (ТАСС фотохроники).

Пĕтĕм вăя—фашизма çĕнтерме

КАНАШ. Вагонсем юсакан заводра çамрăксен митингĕ пулса иртрĕ. Комсомол комитечĕн секретарĕ Колокольнов юлташ çамрăксен Мускаври митингĕ чĕнсе калани çине ĕçпе ответлер: правительство заданийĕсене ытлашшипех тултарар, çĕршывпа фронт валли ытларах вагонсем парар.

Трибуна çине заводри çамрăксем пĕрин хыççăн тепри тухаççĕ. Вĕсен сăмахĕ кĕске те çивĕч. Фронта кам мĕнпе пулăшнă—акă мĕн çинчен калаççĕ вĕсем.

— Манăн группăри комсомолецсем пурте уйăхри нормăна 150—200 процент тултарса пыраççĕ,—тет вагонсем юсакан цехри комсомол группин организаторĕ М. Андреев юлташ.—Уйрăм комсомолецсем Малышкин, Цветков, Кузнецов, А. Цвела тата ытти те сменăри нормăна 3—4 хут тултарса ĕçлеççĕ.

М. Андреев юлташ хăйĕн группипе çамрăксен Мускаври митингне радио тăрăх итленĕ. Çавăн хыççăн комсомолецсем нумайĕшĕ производствăра çĕнĕ çитĕнӳсем тăваççĕ. Комсомолец Малышкин юлташ октябрĕн 4-мĕшĕнче икĕ рамăна 124 сехетре çирĕплетсе лартас вырăнне 33 сехетре çирĕплетсе лартнă. Цветковпа Пекзин юлташсем рамăсен никĕсне хывас ĕçе нормăна пăхнинчен 4 хут хăвăртрах тăваççĕ.

ВЛКСМ комитечĕн членĕ Демьянков юлташ çамрăксем çар ĕçне вĕренни çинчен, комсомолка Руга юлташ Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтир хатĕрлесе пани çинчен каларĕç.

Митингра пулнисем резолюци йышăнчĕç. Çамрăксен фашизма хирĕçле Мускаври митингĕ чĕнсе калани ответлесе, ĕç нормине 200 процентран тултарса пыма, çар ĕçне тăрăшса вĕренме пулчĕç.

Т. ИВАНОВ.

Эпир хĕрӳллĕн çапăçатпăр

Чăваш республикинчен килнĕ красноармеецсем пирĕн часре яланах малти ретре пырса, пуриншĕн те примерлă боецсем пулса тăраççĕ.

Командовани панă заданисене срокра пурнăçлакансене, политикăпа боевой подготовкăра отлично вĕренсе пыракансене часть командованийĕ темиçе хутчен те хисеп хăми çине кĕртнĕ, тав тунă, хаклă премисем панă. Й. Орлов, И. Александров, А. Михеев, Ф. Журавлев, П. Григорьев т. ыт. юлташсем пирĕн часре паллă красноармеецсем шутланаççĕ. Семен Желукин малтанхи кунсенчех отличник пулнăăна командовани отделени командирĕ пулма уйăрса лартрĕ. Пултарулăх командирĕ кĕçĕн сержант ятне панă.

Вăрçăн малтанхи кунĕсенчен пуçласах эпир тăван çĕршыв çине тапăнса килнĕ тăшмансене хирĕç паттăрăн çапăçатпăр. Боец Иван Емельянов геройсен вилĕмĕпе вилчĕ. Вăл яланах малти ретре пырса, тăшмана хирĕç арăслан пек çапăçрĕ. Терентьев, Денисов, Трофимов, Галкин юлташсем темиçе хутчен аманнă пулсан та, çапăçу хирĕнчен тухман.

— Эпир хамăр çĕре никама та парас çук, çĕнтерӳ пирĕнтех пулать, фашизм пирĕн çĕршывра хăйĕн вилĕмне тупнă,—теççĕ красноармеецсем.

С. МАКСИМОВ.
П. ФОМИН.
П. ПИКАЕВ.
И. ПОРТНОВ.

Действующи Арми.

Çĕнĕ кĕнекесем

Степан Алим. Разведчик Комков (калав). Чăваш АССР Государство издательстви. Шупашкар, 1941 ç. Хакĕ 10 пус.

Ку пĕчĕк кĕнекере совет разведчикĕсен паттăрлăхне, вĕсем тăшманăн пысăк вăйĕ умĕнче те сухалса кайманнине кăтартса панă. Пирĕн разведчиксен паттăрлăхне, вĕсем тăшманăн пысăк вăйĕ умĕнче те сухалса кайманнине кăтартса панă. Пирĕн разведчиксем хăюллăн çапăçса ункăран шăтарса тухаççĕ те тăшмана аркатса тăкаççĕ.

Ку ĕçре пуринчен ытла разведчик Сергей Комков хăйĕн паттăрлăхне кăтартать. Калава çăмăл чĕлхепе çырнă.

«Хĕрлĕ ялавпа». Калавсемпе очеркăсем. Чăвашгиз. 1941 ç. Хакĕ 1 т. 30 пус.

Сборникре А. Эсхель, М. Н. Данилов-Чалдун, В. Хударсем, Ф. Уяр, Ф. Ситте, А. Таньков, В. Туртуш, Б. Шашков т. ыт. çырнă оборонăллă калавсемпе очеркăсем кĕнĕ.

Çак кĕнекешĕн тивекен пĕтĕм гонорара авторсем оборона фондне панă.

«Хĕрлĕ ялавпа» сборник—Германи фашизмне хирĕç отечественнăй аслă вăрçă пуçланнăранпа чăваш прозаикĕсем хатĕрлесе панă коллективлă пĕрремĕш кĕнеке.

Организованноçа ӳстерер, сыхăлăха вăйлатар!

Пирĕн тăван çĕршыва хаярран курайманнипе урса хăйнă фашистла захватчиксем тискер-кайăкла вăрă-хурахсен çĕнĕрен çĕнĕ бандисене хăваласа килеççĕ. Вĕсем малалла наступлени туса пыраççĕ. Вĕсем, хăйсен çулĕ çинче вилĕмпе ишĕлтерӳ сарса, пирĕн таса çĕрсене ирсĕрлесе, совет çĕршывĕн пурнăç центрĕсем патнелле сăкăнеççĕ. Совет çĕршывĕ, пирĕн халăх тата вăл тунă аслă çĕнтерӳсем хăрушлăх умĕнче тăраççĕ.

Тăван çĕршыв умне пысăк хăрушлăх тухса тăнă кунсенче пирĕн хамăр халăхăн вăйĕсене татах та таччăнрах пĕтĕртермелле. Пирĕн Хĕрлĕ Çар фронтра хăюллăн та паттăрăн çапăçать, ăна валли тылра вара пирĕн татах та пысăкрах пулăшу хатĕрлемелле. Резерви çарсене вĕрентсе хатĕрленипе пĕрлех, пирĕн самолетсемпе танксем, орудисемпе пулеметсем, снарядсемпе патронсем кунран-кун ытларах та ытларах туса кăлармалла. Тыл мĕн чухлĕ тĕреклĕрех—унăн фронта паракан пулăшăвĕ çавăн чухлĕ пысăкрах.

Тăшман çакна шута илет, çавăнпа та вăл Хĕрлĕ Çăрăн тылне пăсассишĕн, ăна дезорганизацилессишĕн мĕнпур вăйĕпе талпăнать. Тăшман пирĕн тыла шпионсемпе диверсантсем ярать. Тăшман паника тăвасшăн, пирĕн халăхăн шанчăкне иксĕлтересшĕн тăрăшать, çакна тума вăл хăйĕн агенчĕсене—провокаторсене ярать. Провокаци, уйăпша элек тахçанах ĕнтĕ нимĕçсен çăрăн кĕçлăшалĕсем пулса тăраççĕ. Çав вăй-хурахла çăрăн чаçĕсенче, артиллери тенкисен, химипе ытти çăвăн йышши çар чаçĕсемпе пĕрлех, «пропаганда» ротисем—профессионаллă провокаторсен геббельсла ячейкисем пур. Фашистла ирсĕрсем халлĕхе химипе ĕçе ямаллă—çакă вăл кашни парторганизацин, кашни коммунистăн, комсомолецăн, партире тăман активистăн задачи пулса тăрать. Фашистла суяпа элекке ăçта илтнĕ, çавăнта пур çĕрте те: трамвайра, пасарта, заводра, поезд çинче, магазинра, килçуртсенче—пур çĕрте те яланах тăрă шыв çине кăларса пымалла. Тӳрĕ кăмăллă, анчах та ăнланусăр çынна обстановка çинчен ăнлантарса памалла, тăшман агенчĕ пулса тăракан провокатора суд аллине тытса памалла.

Тăшманла провокацисене тăрă шыв çине кăларас тесен, черетлĕ пухăва е доклада кĕтсе тăма кирлĕ мар. Пирĕн фабрикăсенчен пĕрине суя хыпарсем сăрхăнса кĕме пуçланă. Партбюро секретарĕ Бодрова юлташ çийĕнчех тивĕçлĕ мерăсем йышăннă, рабочисемпе работницăсене çав хыпарсем ултавлă пулни çинчен ăнлантарса, суя хыпарсене малалла сарăлма паман. Çак фабрикăри агитаторсем тăшман ĕçĕсене хирĕç кĕрешме яланах хатĕр тăраççĕ, вĕсем пĕтĕм коллектива сыхăлăхлă та асăрханулăн пулма вĕрентеççĕ. Кунта провокаторăн ыррине кĕтмелли çук.

Донбасри Ново-Каракубск больницинче Оба санитарка провокацилле хыпар сарнă. Вăл чирлĕ çынсем хушшинче паника тума хăтланнă. Анчах та провокатора çийĕнчех тытнă та Военнăй Трибуналăн сучĕ аллине панă.

Сухалса кайнисене—ăнлантарса пар, провокатора—ĕнсерен ярса тыт!

Вăрçă вăхăчĕ тылра чи çирĕп революцилле йĕркелĕх тума, çар влаçĕсемпе вырăнти советсен распоряженийĕсене çирĕп тытса пыма, мĕнпур халăха дисциплинăллă пулма хушать. Пысăк организованноçпа дисциплина пур çĕрте тăшман агенчĕн ниçта пытанма та май çук. Предприятие ăçта лайăх сыхласçĕ—унта диверсант сĕкĕнсе кĕреймест. Сывлăшран килсе тапăнинчен сыхланмалли правилăсене ăçта çирĕп тытса пырасçĕ—унта фашистла разбойниксемшĕн кирли çук. Сутă тĕлĕшĕнчен маскировка тăвас условисене ăçта çирĕп тытса пыраççĕ — унта фашистла налетчика çутăпа сигнал парса пулăшакан тăшмана çийĕнчех тытма пулать. Хваттерте пурăнакине çырса пымалли правилăсене ăçта çирĕп тытса пыраççĕ—унта тĕксĕм этем е дезертир пытанса юлма пултараймасть. Пур çĕрте те çакăн пек çирĕп йĕрке пулмалла!

Революцилле йĕркелĕхе пăсакансене пĕр хĕрхенмесĕр айăпламалла. «Ленинградская правда» хаçат çакнашкал фактсем çинчен пĕлтерчĕ: темĕнле Рякина хушаматлăскер чӳречене хупламасăр тăтăшах çутă çутса тăратнă; тепĕр Шкляренкона пилĕк çуллăха тĕрмене хупмалла тунă. Вăрçă вăхăтĕнчи законсене пăсакансене хаяррăн ответ тыттармалла!

Тăшмана пур çĕрте те çирĕп тата çапса аркатмалла отпорпа кĕтсе илмелле. Çавăн пек пулмалла фронтра. Çавăн пек пулмалла фронт çывăхĕнчи районсенче. Тыла тăшман сăкĕнсе кĕрет пулсан, тылра та çавăн пекех пулмалла. Авиаци сула кĕскетет,—фашистсем тыла хăйсен прашютисчĕсене антарма пултараççĕ. Гитлерла бандитсен хăтланăвĕсене тимлĕн асăрхаса тăмалла, вĕсем кирек ăçта пырса тухсассăн та, пур çĕрте те вĕсене хăюллă та çирĕп отпор парса кĕтсе илмелле, пур çĕрте те вĕсене вилĕм кĕтсе тăмалла. Тăшман темĕнле кĕтмен çĕртен пырса тапăнсассăн та, ăна хирĕç пĕр паника тумасăр, пĕр хăрамасăр тухмалла. Паникер, хăраççă—тăшман валли çимĕç, тепĕр чухне вăл тăшманран та хăрушăрах пулать, мĕншĕн тесен вăл оборона ĕçне пăсать. Хăрушлăх çитнĕ самантра совет çыннисем çухалса каймаççĕ, пачах урăхла, хăрушлăх çинчен ăнланса илни кашнин вăй-хăватне татах та ытларах ӳстермелле. Пысăк организованноçпа çирĕплĕх совет çыннисен—фронтра çапăçаканнисен те, тылра ĕçлекеннисен те—чи кирлĕ пахалăхĕ пулса тăмалла.

«Пирĕн тылри мĕнпур йышши дезорганизаторсене, дезертирсене, паникерсене, суя хыпар саракансене хирĕç пĕр шеллемесĕр кĕрешессине организацилемелле, шпионсене, диверсантсене, тăшман парашютисчĕсене пĕтерсе пымалла, çак пĕтĕм ĕçре хамăран истребительлă батальонсене хăвăрт пулăшса пымалла»,—тесе вĕрентет пире Сталин юлташ.—«Хăйсен паникерствипе тата хăравçăлăхĕпе оборона ĕçне чăмăртаракансене, вĕсем камне-мĕнне пăхса тăмасăрах, пурне те сийĕнчех Военнăй Трибунал судне памалла».

Сĕмĕр тăшман малаллах сĕкĕнет. Юнлă çапăçу хаярлансах пырать. Гитлерла çарăн командованийĕ, нимĕнле сухатусене пăхмасăрах, хăйĕн мĕнпур резервисене, хăйĕн урса кайнă мĕнпур войскисене, хăйĕн мĕнпур техникине хăваласа килет. Çавăнпа та эпир паракан отпор татах та çирĕпрех пулмалла! Эпир хамăран алăра питех те пысăк вăйсем тытса тăратпăр, тăшманăн çулне пӳлсе лартас тесен, пирĕн çав вăйсене пухмалла. Хăрушлăх самантĕнче совет çыннисен хăйсен организованноçне татах та ытларах хăпартмалла, сыхăлăха çĕклемелле, тимсĕрлĕхпе йăвашчунлăх шухăш-кăмăлсене пуçĕлех сирсе ямалла.

Тăшманăн вăхăтлăха тунă нимĕнле çитĕнĕвĕсем те совет çыннисен çирĕплĕхне хавшатаймĕç. Положени мĕн чухлĕ йывăртарах, эпир кĕрешӳре çĕнтерме, хамăран тăван совет çĕршывăн çĕнтерме, хамăран тăван совет çĕршывăн çывăхĕнче нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хăваласа кăларма çавăн чухлĕ таччăнрах та вăйлăнрах пĕтĕçсе тăрăпăр.

(«ПРАВДА» хаçатăн октябрĕн 10-мĕшĕнчи умстатьи).

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97 ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 0—88, сырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, дежурнăйăн — 6—23, «Ленин сулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 7102.

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР. Заказ № 490. Ф. б. 58 84 п. л.